26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
4
ШАМАТКУН
239(6476) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Çĕршыва йывăçпа вутă çителĕклĕ парар

Фронтпа çĕршыв интересĕсем вăрман промышленноçне йывăç материалĕсемпе вутă хатĕрлессине ÿстерсе пыма хушаççĕ. Пирĕн республикăри вăрман хатĕрлекен предприятисем тата колхозниксемпе колхозницăсем вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан çак задачăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем турĕç. Йĕпреç, Вăрнар тата ытти чылай вăрманпромхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем, малтанхи çурçулта чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана тултарнă хыççăн, халĕ иккĕмĕш çурçулти плана декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Йĕпреç, Ишлей, Шăхасан, Канаш тата Улатăр районĕсенчи колхозсем те вĕсенчен юлсах пымаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ вăрман хатĕрлемелли плана хăвăртрах тултарас шутпа, ноябрĕн 20-мĕшĕпе декабрĕн 20-мĕшĕ хушшинче фронтовой уйăхлăх ирттерме йышăнчĕ. Фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа вунă кун иртрĕ. Çак тапхăрта чылай вăрманпромхозсемпе районсем хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç. Анчах та фронтовой уйăхлăх кирлĕ пек хăвăртлăхсемпе иртсе пымасть-ха. Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Чкаловски тата Советски районсем вăрманта ĕçлеме паян кунччен ĕç вăйĕ кирлĕ таран мобилизацилемен. Вăл районсем çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнче пысăк парăма кĕнĕ.

Вăрман хатĕрлекен предприятисенчи работниксем те вăрманта ĕçлекенсем валли лайăх условисем тăвас ĕçе тĕрĕс организацилес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сăмахран, Çĕмĕрлери вăрман хуçалăхĕнче вăрман касакансене техника тĕлĕшĕнчен те, ĕçе организацилес енĕпе те никам та пулăшмасть. Унта рабочисем пурăнакан çуртсене йĕркелемен. Çуртсене лайăххăн хутса ăшăтмаççĕ, çутă çук тата таса мар. Пинер вăрманпункчĕн столовăйĕнче çутă çук пирки рабочисем, çутăлла апат çиес тесе, ĕçе кая юлса тухаççĕ тата ĕçрен ир таврăнаççĕ. Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пунктĕнче те çитменлĕхсем сахал мар. Çавăнпа ĕнтĕ унти рабочисем, вăтамран илсен, ĕç нормине 55 процент ытларах çеç тултараççĕ.

Механизмсемпе тата рационализациленĕ ĕç хатĕрĕсемпе усă курасси те çителĕксĕр пулса пырать. Вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсем час-часах транспорт çитмест тесе ÿпкелешеççĕ. Анчах хăйсем вырăнти пуян резервсемпе усă курма тăрăшмаççĕ. Алтăшри вăрманпромхозра рационализациленĕ çулпа усă курмаççĕ. Унта йывăçсене çав çулпа юнашар выртакан çул тăрăх турттараççĕ. Вăрманта ĕçлекенсене ĕç хатĕрĕсем кирлĕ таран тупса памаççĕ, пăчкăсемпе пуртăсем хăйрас ĕçе те йĕркелемен.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çак кунсенче 1943—1944-мĕш çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта вăрман хатĕрлемелли план çинчен постановлени йышăнчĕç. Кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта пирĕн республикăн йывăç материалĕсем тата вутă 1.354 пин кубометр хатĕрлемелле, 265 пин кубометр механизациленĕ çулсем патне тата 1.240 пин кубометр лаша вăйĕпе турттармалла. Çак ĕçĕн пысăк пайне колхозсен вăйĕпе пурнăçа кĕртмелле.

Мĕн кирлĕ-ха çак ответлă ĕçе вăхăтра пурнăçа кĕртмешкĕн? Районсенчи партипе совет организацийĕсен вăрман хатĕрлекен организацисемпе пĕрле вăрман хатĕрлемелли тата турттармалли плана кашни ялсовет, кашни колхоз патне çитермелле. Колхозниксемпе колхозницăсене вăрман хатĕрлевĕ питех те кирлĕ ĕç пулни çинчен ăнлантарса памалла тата ĕç йĕркисемпе паллаштармалла. Вăрмана ĕçлеме каякан çын кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта, вăл çуран ĕçлет пулсан, 110 кунхи нормăна, лашапа ĕçлет пулсан, 100 кунхи нормăна тултарма тивĕçлĕ. Çак нормăна тултаракансене ĕç повинноçĕ йĕркипе ытти ĕçе ярассинчен хăтараççĕ. Плана ирттерсе тултаракансене хушса тÿлеççĕ. Çаксем çинчен вăрманта ĕçлекен кашни колхознике тĕплĕн пĕлтермелле.

Вăрман хатĕрлекен предприятисен руководителĕсем колхозниксемпе колхозницăсене лайăх йышăнса илмелле тата ĕçе тĕрĕс йĕркелемелле. Бригадăсемпе звеносем организацилесе, вĕсене участоксем çирĕплетсе памалла. Вăрман хатĕрленĕ çĕрте ĕçлекенсем валли вĕри апат вырăна пырса памалла. Çурт-йĕрсене таса тытмалла, тумтирсене типĕтмелли вырăнсем туса памалла. Ĕçлекенсене медицина тĕлĕшĕнчен пулăшассине организацилеме фельдшер пункчĕсем уçмалла. Суту-илÿ ĕçне кирлĕ пек йĕркелес пулать. Партипе профсоюз организацийĕсен ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелесси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Кашни рабочипе колхознике социализмлă ăмăртăва явăçтармалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ механизмсемпе вăрман турттарас ĕçе тата лайăхлатма хушса хăварчĕç. Кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта пĕр тракторпа 12.000 кубометр тата автомашинăпа 450 кубометр турттармалла. Çакна пурнăçа кĕртес тесен, вăхăта вăраха ямасăр пĕтĕм механизмсене тата рационализациленĕ çулсене юсаса йĕркене кĕртес пулать. Газогенераторлă машинăсем валли топливо çителĕклĕ хатĕрлемелле. Плана ирттерсе тултаракан трактористсемпе шоферсене тата мотористсемпе машинистсене хăйсен ĕçукçин 50 проценчĕ чухлĕ хушса тÿлемелле тунă. Çакăн çинчен тĕплĕн ăнлантарса парса, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырас пулать.

Кăçал республикăри ĕççыннисем промышленность предприятийĕсемпе учрежденисем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç. Çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана 122,7 процент тултарнă. Халĕ ĕнтĕ хатĕрленĕ вутта пĕтĕмпех турттарса кăларассине организацилемелле. Партипе совет организацийĕсен ку тĕлĕшпе предприятисемпе учрежденисене тата организацисене ĕçлĕ пулăшу памалла.

Вăрман хатĕрлекен организацисемшĕн хĕллехи тапхăр хĕрÿллĕ вăхăт пулса тăрать. Вăрман хатĕрлемелли плана пĕтĕмпех тата пахалăхлăн тултарасси çак тапхăрти ĕçсенчен килет. Çавăнпа та пирĕн халĕ вăйсене мĕн май пур таранах вăрман хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртес ĕçе мобилизацилемелле.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăха большевикла организацилесе, çĕршывпа фронта йывăç материалĕсем тата вутă çителĕклĕ парар!

**Государствăна тырă сутас ĕçе активлăн хутшăнкă тата сутнă тырра Заготзерно пункчĕсемпе ялпо склачĕсене вăхăтра леççе панă çак колхозсемпе колхозниксене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:**

1. Вăрмар районĕнчи **«Арабусь» колхоз** (колхоз председателе **Соснов** юлташ, пуçламĕш парторганизацин секретарĕ **Львов** юлташ). Çак колхоз государствăна 8.400 пăт тырă сутнă, çав шутран 4.500 пăтне колхозниксем хăйсем перекетлесе усранă тырринчен сутнă. Пĕтĕм сутнă тырра Заготзерно пункчĕсене леççе панă.
2. Вăрмар районĕнчи **«Большевик» колхоз** (колхоз председателĕ **Игнатьев** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Ильина** юлташ). Ку колхоз государствăна 7.200 пăт тырă сутнă, çав шутран 2.580 пăтне колхозниксем хăйсем перекетлесе усранă тырринчен сутнă. Пĕтĕм сутнă тырра Заготзерно пункчĕсене леççе панă.
3. Тăвай районĕнчи **«Пламя» колхоз** (колхоз председателĕ **Иванов** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Федоров** юлташ). Колхоз государствăна 2.580 пăт тырă сутнă, çав шутран 1.082 пăтне колхозниксем хăйсен перекетлесе усранă тырринчен сутнă. Пĕтĕм сутнă тырра хатĕрлев пунктне леççе панă.
4. Тăвай районĕнчи **«Красная Чувашия» колхоз** (колхоз председателĕ **Иванов** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Павлов** юлташ). Колхоз государствăна 12.175 пăт тырă сутнă. Пĕтĕм сутнă тырра хатĕрлев пунктне леççе панă.
5. Тăвай районĕнчи **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Григорьев** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Конева** юлташ). Ку колхоз, колхозниксемпе пĕрле, государствăна 12.145 пăт тырă сутнă. Сутнă тырăран 9.261 пăтне хатĕрлев пунктне леççе панă, ытти пайне халь васкаса леççеççĕ.
6. **А. Гаязов** — Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозăн председателĕ. Вăл государствăна 105 пăт тырă сутнă. Пĕлтĕр Гаязов юлташ Хĕрлĕ Çар валли боевой техника тумашкăн 105 пин тенкĕ укçа тата 30 пăт тырă панăччĕ.
7. **И. Краснов** — Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ. Вăл государствăна 100 пăт тырă сутнă.
8. **П. Маркиянов** — Йĕпреç МТС-ĕнчи комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ. Вăл государствăна 100 пăт тырă сутнă.
9. **Н. Андреев** — Советски районри «Сеятель» колхозăн председателĕ. Вăл государствăна 80 пăт тырă сутнă.
10. **В. Соснов** — Вăрмар районĕнчи «Арабусь» колхозăн председателĕ. Вăл государствăна 80 пăт тырă сутнă.
11. **Майков** — Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн председателĕ. Вăл государствăна 75 пăт тырă сутнă.
12. **Е. Арсентьева** — Вăрнар МТС-ĕн трактористки. Вăл государствăна 150 пăт тырă сутнă.

## *Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсене большевикла с а л а м!*

**Елчĕк районĕнчи „Марс" колхоз председательне А. Г. ГАЯЗОВ юлташа, государствăна 105 пăт тырă сутнăскере,**

**Йĕпреç МТС-ĕн комбайнерне П. М. МАРКИЯНОВ юлташа, государствăна 100 пăт тырă сутнăскере,**

**Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхоз председательне И. П. КРАСНОВ юлташа, государствăна 100 пăт тырă сутнăскере,**

**Вăрнар МТС-ĕн трактористкине Е. А. АРСЕНТЬЕВА юлташа, государствăна 150 пăт тырă сутнăскере**

**Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ сирĕн патриотла ĕçе—хăвăрăн запасăрсенчен государствăна 100 пăт е ытларах тырă сутнине пысăка хурса хаклаççĕ. Çакă вăл тăшмана çĕнтерес ĕçе вăйлă пулăшу пани пулать. Сирĕн пример пирĕн нумай колхозсемпе колхозниксене государствăна тырă сутас ĕçе активлăн хутшăнма пулăшрĕ. Сире хĕрÿллĕн саламлатпăр тата малашнехи ĕçре çитĕнÿсем тума ырă сунатпăр.**

**Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.**
**ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.**

## Тăшмана пуçĕпех аркатма

ТАВАЙ. Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ тунă доклад районри колхозниксемпе колхозницăсен ĕçри хастарлăхне çĕклерĕ. Вĕсем, çĕршывпа фронта пĕтĕм чунхавалтан пулăшма пулса, хăйсен ытлашши тыррисене йăлтах государствăна сутаççĕ.

Декабрĕн 3-мĕшĕ тĕлне районĕпе пурĕ государствăна 105.500 пăт тырă сутнă, вăл шутран хатĕрлев пунктне 55.958 пăт, сельпо склачĕсене 32.787 пăт леçнĕ. «Большевикла колхозшăн» колхоз членĕсем государствăна 1220 пăт тырă сутса йăлтах хатĕрлев пунктне леçнĕ. Çавăн пекех «Новый путь» колхозра та сутнă тырра пĕтĕмпех Заготзерно пунктне леççе панă.

**А. ЖИРОВ,**
**Райсовет исполкомĕн председателĕ.**

### *Фронтри ывăлĕсене пулăшать*

ИШЛЕЙ. Сыпайкасси ялсоветĕнчи колхозсенче агитаторсем Сталин юлташăн докладне тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Çавăн хыççăн колхозниксен патриотизмĕ татах та ÿсрĕ. «Клевер» колхозра (унта агитатор пулса Щукина юлташ ĕçлет) государствăна 1.800 пăт тырă сутрĕç. 68 çулхи колхозник С. Калинин пухура çапла каларĕ:

— Манăн 4 ывăл нимĕç захватчикĕсене хирĕç фронтра çапăçать. Эпĕ кăçал колхозра ĕçлесе чылай тырă илтĕм. Çак тырăран государствăна 8 пăт сутатăп, фронтри ывăлăмсене çĕнтерÿ тума пулăшатăп, — терĕ.

Ялсоветĕнчи «Труд» колхоз государствăна 2.100 пăт, «Ыраш» колхоз 1.800 пăт, «Вускасси» колхоз 1.200 пăт, Свердлов ячĕпе тăракан колхоз 1.620 пăт тырă сутрĕç.

Халĕ колхозниксем сутнă тырра хатĕрлев пунктне леççеççĕ.

**В. ГУСЬКОВ.**

## Сутнă тырра—хатĕрлев пунктне

СĔНТĔРВĂРРИ, декабрĕн 2-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Турханкасси ялсоветĕнчи «Верный путь» колхоз государствăна 416 центнер, «Осоавиахим»—240 центнер, Урицкий ячĕпе тăракан колхоз—239 центнер тырă сутрĕç. Колхоз председателĕсемпе бригадирсем кашниех 10—15-шер пăтран кая мар сутнă. Халĕ колхозсем сутнă тырра хĕрлĕ обозсемпе хатĕрлев пунктне леççеççĕ.

**В. ИЛЬИН.**

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### *ДЕКАБРĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА*

**Декабрĕн 2-мĕшĕнче СОЖ шывĕпе ДНЕПР шывĕ хушшинче, ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла йышăнса илнĕ, вĕсен шутĕнче — КАНАВА, ЗВОНЕЦ, СТАРЫЙ ДОВСК, КЛЕТИЩЕ, ПЕТРАВИЧИ, ХИЗОВО, БЕРЕСТОВЕЦ, МЕРКУЛОВИЧИ, ГОЛОВАЧИ, ЛОЗОВ, НЕГОВКА, БРОННИЦА, ЗАБАБЬЕ, ГУБИЧИ, ДЕДОВ КУРГАН, НЕСОЕВ, НИКОЛАЕВ ятлă пысăк пунктсем.**

**ПРИПЯТЬ шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, НИЖНИЙ МЛЫНОК, ЗАВОЙТЬ, СМОЛЕГОВ, БУДА, БУДКИ, ГОЛОВЧИЦЫ, ГРУШЕВКА, АНТОНОВ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.**

**ЧЕРКАССЫ районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă, ăна çынсемпе техника енчен пысăк çухатту кÿнĕ.**

**КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сирсе ярса, унăн оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—СКОБИЕВКА, РЕВОВКА, ЗОЛОТАРЕВКА, СЕРЕБРЯНАЯ, ФЕДОРКИ, ДМИТРОВКА, ПРОТОПОПОВКА ятлă пунктсене тытса илнĕ.**

**Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.**

**Декабрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 71 танкне персе çĕмĕрнĕ е лĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 23 самолетне персе ÿкернĕ.**

☆ ☆ ☆

Гомель хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн хирĕç тăмалли темиçе узелне аркатса тăкнă, малалла наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 80 пункта ытла тытса илнĕ. Нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 26 танкне тата 2 бронемашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче—шултăра йышши 25 миномет тата боеприпассен пысăк складне. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра совет артиллерисчĕсем, тăшман тăракан вырăна вăйлăн персе тăрса, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тÿстернĕ.

* * *

Припять шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пĕр соединени чаçĕсем, тăшманăн контратакисене сире-сире ярса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе нимĕçсем хăйсем хÿтĕлеме хатĕрленĕ позицийĕсене пăраха-пăраха хăвараççĕ. Пирĕн боецсем гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, 5 танк тата 3 бронемашина персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Черкассы районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă. Нимĕçсем çав района йышлă вăй илсе пынă, пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăрах, çав вăйсене çапăçăва кĕрте-кĕрте янă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшманăн контратакисене сирсе тăрса, нимĕçсен 24 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 1.000 вилли ытла выртса юлнă. Çÿлелле перекен артиллери нимĕçсен 8 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ. Бандуровка ятлă пункт районĕнче совет боецĕсем нимĕçсенчен трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче—27 танк тата 25 бронетранспортер. Тепĕр участокра пирĕн çарсем тăшман пехотине турттарса пыракан автомашинăсен колоннине пĕтерсе тăкнă. 400 гитлеровеца ытла вĕлернĕ е амантнă. Чылай çынна тыткăна илнĕ. Тăшмантан 7 тупă, 36 пулемет, танксене пемелли 11 пăшал тата винтовкăсем, автоматсем, тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

* * *

Хура тинĕсри флотăн авиацийĕ тăшманăн 2.000 тонна таякан суднине, пĕр буксирне тата хăй тĕллĕн 3 баржине (çав баржăсенчен пĕри автомашинăсем тиенĕскер, тепри танксем тиенĕскер пулнă) шыва путарнă. Кунсăр пуçне, нимĕçсен 2 транспортне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 5 баржине путарнă.

* * *

Полесье облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ 2 кун хушшинче нимĕçсен фронт патнелле каякан 3 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 2 паровоз, 7 класнăй вагон, боеприпассем тиенĕ 5 вагон тата тупăсем тиенĕ темиçе платформа çĕмĕрĕлсе кайнă. Çав отрядри партизансемех темиçе поезда танксене пемелли пăшалсемпе пенĕ. 6 паровоза юрăхсăра кăларнă, эшелона хуралласа пыракан 128 гитлеровеца вĕлернĕ е амантнă.

* * *

Хаяр çапăçусенче Хĕрлĕ Çар тăшманăн çыннисемпе техникине пĕтерсе пырать. Тыткăна лекнĕ салтаксем каланă тăрăх, нимĕçсен хăшпĕр дивизийĕсене, вĕсенче çын ытла сахал тăрса юлнă пирки, ытти чаçсемпе пĕрлештернĕ. Тытса илнĕ документсем те çавăн çинчен калаççĕ. Сăмахран, нимĕçсен 262-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ панă приказра, пирĕннисем тытса илнĕскерте, çапла каланă: «Пирĕн нумай салтак пĕтрĕ, питĕ нумай çын аманнă, хăшĕ-пĕри тыткăна лекнĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн пехотнăй полкĕсене çĕнĕ вăйсем хушса пама май çук пирки, командовани 262-мĕш дивизири чаçсен юлашкийĕсене пĕрле хутăштарса ярса 56-мĕш пехотнăй дивизипе пĕрлештерме хушнă. Çакă вăл пирĕншĕн пуриншĕн те пысăк хуйхă пулса тăрать...»

Нимĕçсен 293-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 2-мĕш санитари ротинчен тыткăна лекнĕ салтак çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть пире хамăр дивизие урăхла йĕркелеме хушакан приказ вуласа пачĕç. Приказра çапла каланă: «293-мĕш дивизире çын питĕ сахал тăрса юлчĕ, çавăнпа ăна штаб вырăнне пĕр çын та ертсе пыма пултарать. Тăрса юлнă подразделенисене боевой группăна пĕрлештермелле, çав группăна Шульте майор ертсе пырĕ. Вăл группа 355-мĕш пехотнăй дивизири 866-мĕш полкăн командованине пăхăнса тăмалла».

Хĕрлĕ Çар енне куçнă унтер-офицер Генрих Б. çапла каласа панă: нимĕçсен 333-мĕш пехотнăй дивизийĕ питĕ пысăк çухату тÿсрĕ, унăн юлашкийĕсене нимĕçсен 294-мĕш пехотнăй дивизийĕпе пĕрлештерсе ячĕç, тенĕ.

Нимĕçсен 340-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 340-мĕш артиллери полкĕн 3-мĕш батарейинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Вальтер Маккерт çапла каласа панă: «Пирĕн артиллери полкĕн мĕнпур хатĕрĕсем пĕтрĕç. 327-мĕшпе 377-мĕш пехотнăй дивизисене те, питĕ пысăк çухатусем тÿснĕ пирки, пĕр дивизие пĕрлештернĕ, çав дивизие полковник Помм ертсе пырать».

* * *

Çак кунсенче Совет Информаци Бюровĕ çапла пĕлтерчĕ: Себежра тата Бобруйскра нимĕçсен çар влаçĕсем, хăйсен преступленийĕсен йĕрĕсене шăлса лартма хăтланса, персе вĕлернĕ совет гражданĕсен виллисене çунтара-çунтара яраççĕ, терĕ. Нимĕçсем вăхăтлăха оккупациленĕ ытти совет районĕсенчен те халь çавăн пекех пĕлтереççĕ. Минскра нимĕçсен çар влаçĕсем çав хула таврашĕнчи масарсене пĕтерсе лартмашкăн ятарласа темиçе команда тунă. Çав командăсем нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ темиçе пин совет гражданне пытарнă йышлă шăтăксене чаваççĕ те унтан вилĕсене туртса кăлараççĕ, вĕсене вара бензинпа сапаççĕ те çунтарса яраççĕ. Персе вĕлересрен хăраса çав шăтăксене чавнă совет гражданĕсене те нимĕçсем вĕлернĕ, вĕсен виллисене те çунтарса янă. Орша хулинчи нимĕçсен çар влаçĕсем те çавăн пекех хăтланаççĕ. Ноябрь уйăхĕн иккĕмĕш çурринче гитлеровецсем вилĕ шăтăкĕсене чавма пуçланă, çав шăтăксене фашистла пуçкасакансем вĕлернĕ совет гражданĕсене нумай пытарнă. Çав вилĕсене автомашинăсем çине тиесе Оршăри йĕтĕн комбинатне илсе кайнă та унта пысăк хуран айĕнчи вут çине пăрахнă.

Нимĕçсен фашистла влаçĕсем совет çĕрĕ çинче тунă преступленисен йĕрĕсене шăлса лартма хăтланаççĕ. Гитлеровецсем хăйсен тискер ĕçĕсемшĕн вĕсене тавăрассинчен хăраççĕ. Анчах та нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хăйсене хаяррăн тавăрассинчен темĕнле хăтланса та çăлăнса юлаймĕç.

## *Предприятисенчен пĕлтереççĕ*

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Районри предприятисемпе промысла артельсенче çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Нумай коллективсем хăйсен обязательствине ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ. «Коммунар» артель коллективĕ 1943 çулхи плана продукци туса кăларас енĕпе 142,6 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 228 процент тултарчĕ. Çĕнĕ çулччен артель планран ирттерсе темиçе вунă пин тенкĕлĕх продукци парать.

**К. ФЕДОРОВ.**

* * *

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра рабочисене апат-çимĕç продукчĕсем тăратас ĕçе мĕнле йĕркелесине сÿтсе-явас ыйтупа конференци пулса иртрĕ. Конференцире рабочисем апат-çимĕç продукчĕсем тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен отделăн ĕçне тĕплĕн критикăларĕç. Вăл таварçаврăнăш планне виçĕ квартал хушшинче 105,9 процент тата октябрь уйăхĕнче 102 процент тултарнă. Заводра производствăра нумай вăхăт хушши ĕçлекен çынсемпе стахановецсене лайăхрах апат-çимĕçсем парас ĕçе организациленĕ. Конференци заводра суту-илÿ, столовăй ĕçне татах та лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли мероприятисем палăртса хăварчĕ.

**(Хамăр информ.).**

## Кок-сагыз ăнса пулчĕ

ШАХАСАН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Ухманти «Победа» колхоз кăçал темиçе вунă центнер кок-сагыз тымарĕ тата кок-сагыз вăрри нумай пухса илнĕ. Çапла вара, вăтамран шутласан, гектартан 13,2-шер килограмм тымар, 41-шер килограмм вăррине пухса илнĕ. Кок-сагыз акса тăвакан бригадăра 20 çын ĕçлеççĕ. Бригадăка комсомолка Мария Михайлова ертсе пырать. Вĕсене лайăх ĕçленĕшĕн государство 17.000 тенкĕлĕх промтоварсем парса премилерĕ

## ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

**Тăван хулана хӳтĕленĕ çĕрте кĕрешнĕ хĕр**

Тăван çĕршывăн чаплă хĕрĕ Анастасия Ивановна Курченко Одесса, Севастополь, Сталинград тата Ленинград хулисене паттăррăн хӳтĕленĕ çĕрте активлă кĕрешнĕ.

Ӳкерчĕк çинче: старши лейтенант А. И. Курченко. Ана «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе тата «За Оборону Одессы», «За Оборону Севастополя», «За Оборону Сталинграда», «За Оборону Ленинграда» медальсемпе наградăланă. Халĕ вăл Хĕрлĕ ялавлă Балтика флотĕнче тăрать.

В. ЧЕРНЫШЕВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

## Александр Космодемьянский

Хăйĕн аппăшне Зойăна гитлеровецсем çакса вĕлернĕ вăхăтра вăл 16 çулта пулнă. Зоя вилнĕ, унăн сăнĕ асра çеç тăрса юлнă, анчах вăл чĕрене çунтарса тăнă, гитлеровецсене пĕр шеллемесĕр тавăрма хушса тăнă. Аппăшне асаплантарса вĕлернĕшĕн Александр фашистсене хăй тавăрасшăн пулнă, çак шухăш ăна пĕр минутлăха та канăç паман. Вăл танковый училищине вĕренме кайнă.

Юлашкинчен, унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнĕ. Александр йывăр танкăн командирĕ пулса тăнă. Вăл хăйĕн танкĕн хăватлă вăйне лайăх пĕлнĕ, ăна фашистсене хирĕç яма хатĕр тăнă. Çĕрле. Ракетăсем çӳлелле вĕçе-вĕçе хăпарнă, кĕрешӳ пуçланассине кĕтсе тăнă. Пĕр чарăнмасăр пушкăсем кĕрленĕ, снарядсем çурăла-çурăла пынă. Танксен моторĕсем кĕрленĕ, атака тумалли сехет çывхарса пынă. Александр Космодемьянский хăйĕн машинине тепĕр хут тĕрĕслесе тухнă. Танк вырăнтан хускалса кайнă. Танксем пĕрле пралук картисене тата-тата, тăшман траншейĕсене ишсе-ишсе, вирлĕн малалла кайнине пехотинецсем тĕтĕм витĕр курнă. Танкистсем тăшманăн тепĕр тăракан точкисене тата унăн салтакĕсене пĕтерсе пынă. Красноармеецсем, пурте пĕр çын пек пулса, танксем хыççăн чупнă.

Гварди лейтенанчĕн—Космодемьянскин хăватлă «КВ» танкĕ нимĕç «оборонин» пĕрремĕш линийĕ урлă каçнă та, снарядсем тивнине пăхмасăр, малалла пĕрхĕннĕ. Стрелок-радист Субботин тĕл персе тăшман пехотине вĕлерсе пынă, механик-водитель машинăна снарядсем лексе пыракан вырăнсенчен пăрса пынă. Космодемьянский хушнă тăрăх вăл ăна тăшманăн блиндажĕсем çине те тапăнса кĕртнĕ.

Вилнĕ нимĕçсен йăвана-йăвана кайнă, чĕрĕ юлнă салтаксемпе офицерсем, тарма хăтланса, çав вилĕсем урлă сике-сике каçнă. Космодемьянскин йывăр танкĕ пĕр блиндаж çине пырса кĕнĕ. Унта вăл пăртак чарăнса тăнă та унтан çĕнĕрен малалла кайнă, пехотинецсем валли çул уçса пынă. Космодемьянскин танкĕ ишнĕ блиндажран нимĕçсем аллисене çӳлелле çĕклесе тухнă. Вĕсем тăрăн пулнă. Кĕтмен çĕртен пырса тапăннипе вĕсен сехрисем хăпса тухнă, вĕсем чĕтренĕ.

— Маттур эсĕ, танкистсем, — тенĕ кĕçĕн сержант. Унтан вăл тытса кайна пленниксене штаба илсе кайма хушнă та боецсемпе пĕрле, танк хыççăн малалла чупнă.

Пехотинецсем çав çапăçура пурне те тĕлĕнтерсе янă танка Совет Союз Геройĕн Зоя Космодемьянскаян шăллĕ ертсе пынине пĕлмен. Анчах та вĕсем ку машинăна тăшмана пĕтĕм чунтан-чĕререн курайман çын, ăна вырăс юнĕшĕн тавăрма тăрăшакан çын ертсе пынине туйса тăнă.

Майор С. РОДИНОВ.

Действующи арми, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ).

*Тăван çĕршывалла*

Белоруссин ССР-ĕн вырăс драма театрĕ Белоруссин ирĕке кăларнă районĕсене тухса кайнă. Вăл унта çар чăçĕсемпе вырăнти халăха спектакльсем парса парать.

# ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХСЕНЕ ЛАЙĂХ ПĂХСА ХĔЛ КАÇАРАР

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче выльăхсене йышне тата вĕсен продуктивноçне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн республикăри колхозсем çултан çул çĕнĕ ситĕнӳсем тăваççĕ. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри плана ĕне-выльăхсем енĕпе 115,3 процент, сыснасем енĕпе 116,8 процент тата сурăхсемпе качакасем енĕпе 119,2 процент тултарнă. Республикăри 22 район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур тĕлĕшпе те пурнăçа кĕртнĕ. Уйрăмах ку енĕпе Элĕк, Шăхасан, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Сĕнтĕр, Çĕрпӳ, Шупашкар, Советски, Вăрмар тата Канаш районĕсенчи колхозсем лайăх ĕçлеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх пăхакан колхозниксемпе колхозницăсем фронтпа çĕршыва выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах парассишĕн вăя шеллемесĕр тăрăшаççĕ. Колхозсем государствăна аш-какай памалли плана вăхăтра тултарнă. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма республикăри колхозсем Орел тата Смоленск облаçĕсене 3.050 сурăх, 2.500 сысна янă. Халĕ вĕсем валли тата 5.000 пуç выльăх-чĕрлĕх, 2.000 пуç кайăк-кĕшĕк пăхса ситĕнтереççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче колхозсенчи фермăсенче выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен пултаруллă кадрсем чылай ӳссе ситĕнчĕç. Кăçал кăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн 210 çынна «Отличник социалистического сельского хозяйства» значокпа наградăланă. Вĕсем питех те паха ĕçсем тунă. Çапла, Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхозри сысна пăхакан Ф. Васильева юлташ 8 сысна аминчен 162 сысна çури илнĕ. Ана хăйне çак ситĕнӳшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе 16 çăвăр параççĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи «Молодая сила» колхозри сысна пăхакан колхозница 8 амаран 146 çăвăр илнĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри пăрусем пăхакан Белянина юлташ хăй сумне çирĕплетнĕ пăрусене пĕтĕмпех тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ӳстерчĕ. Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ Шептах» колхозри ĕне сăвакан Христофорова юлташ 9 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 1.276 литр сĕт суса илнĕ. Ку пек примерсене нумай илсе кăтартма пулать. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсен фронтпа, çĕнтерӳшĕн чăннипех те вăя шеллемесĕр ĕçленине кăтартса параççĕ.

Çапла, пирĕн республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе палăрмаллах ситĕнӳсем тунă. Иртнĕ çулта республика Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçрĕ. Кăçал та ăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă. Çак пысăк награда пире малашнех тата та лайăхрах ĕçлеме чĕнет.

Выльăх-чĕрлĕхсене сыхласа усрас тата вĕсен йышне пĕрмаях ӳстерсе пырас тесен, пирĕн выльăхсене лайăх пăхса хĕл каçармалла. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ хушнă тăрăх, кăçал октябрĕн 15-мĕшĕнчен ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче республикăри колхозсенче выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухнă. Çав тапхăрта нумай колхозсем пысăк ĕçсене пурнăçа кĕртрĕç. Выльăх-чĕрлĕхсене усрама çĕнĕрен çуртйĕрсем турĕç, фермăсенчи çуртйĕрсене юсаса ăшăтрĕç, выльăх апачĕсем хатĕрлерĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен, нумай колхозсем выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе çитнĕ.

Анчах выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе пур колхозсем те кирлĕ пек ĕçлемен. Уйрăмăнах ку тĕлĕшпе Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Чкаловски, Шăмăршă тата Тăвай районĕсенчи колхозсем çителĕксĕр ĕçленĕ. Первомайски районри 43 колхозран 17 колхозра выльăхсем валли çуртйĕрсем çитмеççĕ. Тăвай тата Йĕпреç районĕсенче те çавăн евĕрлех. Канаш районĕнчи Татмăш тата Сĕнтĕр районĕнчи Пĕчĕк Тĕмер колхозĕсенче ферма çурчĕсене витсе çитермен. Унта иртнĕ çулти тислĕк те ку таранччен фермăсенче выртать. Çĕмĕрле районĕнчи «Красный Атмал» колхозра çуртйĕрсем çитмен пирки пăрусене пăхса усрама колхозниксене салатса панă.

Хăшпĕр колхозсен председателĕсем выльăхсем валли апат-çимĕç хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Чылай колхозсенче ку тарана çитсе те шултăра апатсене шута илсе пĕтермен тата вĕсене фермăсене турттарса пыман. Апатсене мĕнле расходламалли плансене туман. Çав колхозсенче выльăх-чĕрлĕх апачĕсене тирпейсĕр расходлаççĕ.

Республикăри малта пыракан колхозсем выльăхсем валли вырăнсенче тупма май пур апат-çимĕçсене хатĕрлеççĕ. Çапла, Вăрнар районĕнчи колхозсем 7.500 пăт йĕкел пухнă. Вăл районри Сталин ячĕпе тăракан колхоз кăна 1.500 пăт йĕкел пухнă. Кун пек колхозсем ытти районсенче те пур. Анчах вĕсен опычĕпе пур районсенче те мар усă курчĕç.

Хĕл кунĕсем пуçланчĕç. Хĕллехи вăхăтра выльăхсене лайăх пăхса усрама пирĕн республикăри колхозсен условисем çителĕклĕ таранах пур. Апла пулсан, выльăхсене лайăх пăхса хĕл каçарасси колхоз руководителĕсем ĕçе пĕлсе организациленнинчен, выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерессишĕн куллен тăрăшса ĕçленинчен килет. Кашни колхозăн выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене çак çывăх кунсенчех вĕçлемелле. Часах ака выльăхсем пăрулама пуçлаççĕ. Çамрăк выльăхсене усрама ăшă çуртсем хатĕрлес пулать. Выльăхсем валли апат-çимĕç çителĕклĕ хатĕрлесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Вĕсене мĕнле расходланине куллен шута илсе пымалла, апат-çимĕçе перекетлĕн тыткаламалла. Кашни колхозрах выльăх апачĕсене зоотехника кăтартнă пек хатĕрлессине организацилемелле. Выльăхсене минераллă апатсем ытларах парассишĕн тăрăшмалла.

Колхоз председателĕсемпе çĕрĕç работникĕсен тата фермăсенче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсен тивĕçлĕх—выльăх-чĕрлĕхсене лайăх пăхса хĕл каçарасси пулать. Çак ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртни выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн продуктивноçне ытларах ӳстерме пулăшать.

Т. КАРАСЕВА.

### Республикăри МТС-сем 1943-мĕш çулхи IV-мĕш кварталта тракторсем юсамалли плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан СВОДКА

| МТС-сем | Мĕн процент тултарнă |
|---|---|
| Йĕпреç | 135,2 |
| Канаш | 111,1 |
| Комсомольски | 80,0 |
| Шупашкар | 75,0 |
| Вăрнар | 68,7 |
| Шăхасан | 60,0 |
| Елчĕк | 58,8 |
| Сĕнтĕр | 56,2 |
| Çĕрпӳ | 54,1 |
| Красноармейски | 50,0 |
| Ишлей | 40,0 |
| Хĕрлĕ Чутай | 40,0 |
| Кувакино | 40,0 |
| Элĕк | 31,2 |
| Тăвай | 31,2 |
| Первомайски | 27,2 |
| Шăмăршă | 23,0 |
| Куславкка | 20,0 |
| Чкаловски | 18,7 |
| Вăрмар | 17,6 |
| Пăрачкав | 14,2 |
| Улатăр | — |
| Сĕнтĕрвăрри | — |
| Сĕмĕрле | — |
| Етĕрне | — |
| Чăваш АССР-ĕ тăрăх | 41,3 |
| 1943 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă | 21,8 |

Ӳкерчĕк çинче: Ишлей районĕнчи Мамăш ялсоветĕнчи «Ударник» промысла артелĕн куспарĕ П. Яковлев юлташ. Вăл ĕç нормине тăтăшах 150—165 процент тултарса пырать.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

## Кунсерен çĕнĕ çитĕнӳ

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод коллективĕ Сталин юлташăн докладне тулли кăмăлпа хавасланса кĕтсе илчĕ. Заводри рабочисемпе работницăсем тата инженерла-техникла работниксем Сталин юлташ фронта пулăшмашкăн вăя шеллемесĕр ĕçлеме чĕннине çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе ответлеççĕ. Решетов юлташăн бригадине нумай пулмасть пĕр ответлă ĕç хушнă пулнă. Унăн бригади 3 çынтан тăрать. Бригада çав ĕçе илсенех стахановла вахтăна тăчĕ. Икĕ талăк ытла цехран тухмасăр ĕçлерĕç вĕсем. Çапла, ответлă ĕçе срокчен 6 сехет маларах, отличнăй пурнăçа кĕртрĕç.

Нумай рабочисемпе работницăсем Сталин юлташ докладне итленĕ хыççăнах çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Механически цехри комсорг Кривцов юлташ куллен виçĕ норма тултарма сăмах панă. Халĕ вăл тăватă норма тултарать. Тимĕрçĕ цехĕнчи электросварщик Ластовка юлташ та хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл кунсерен виçĕ норма тултарать.

Заводри чылай цехсен коллективĕсем тата нумай бригадăсем стахановла вахтăна тăраççĕ. Вагонсем тăвакан цехри рабочисем стахановла вахтăн малтанхи кунĕнчех паллă ӳсĕм турĕç. Сухоруков бригади хăйĕн пĕр кунхи планне 450 процент, Корсаков бригади 350 процент тултарнă. Çав цехра ик-виçĕ норма тултаракансен йышĕ ӳссех пырать. Утиль цехĕнчи стахановка Нурмухамедова юлташ нихăçан та икĕ норматан кая тултарман. Халĕ вăл, Сталинла Конституци кунне çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешсе, плана 250 процент таран тултарма тытăнчĕ. Кун пек примерсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Завод коллективĕ пĕр туйăмпа — фронта ытларах та ытларах пулăшас туйăмпа ĕçлесе пурăнать.

(Хăмăр инфор.).

### Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли 1943-мĕш çулхи иккĕмĕш çур çулти плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан СВОДКА

| Районсем | Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе | Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе | Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе | Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе |
|---|---|---|---|---|
| Йĕпреç | 98,3 | 73,9 | 1 | 6 |
| Сĕнтĕрвăрри | 87,2 | 80,0 | 2 | 1 |
| Канаш | 82,8 | 73,9 | 3 | 5 |
| Ишлей | 77,5 | 50,0 | 4 | 15 |
| Шăхасан | 77,3 | 79,0 | 5 | 2 |
| Улатăр | 75,0 | 72,5 | 6 | 7 |
| Вăрмар | 74,2 | 75,0 | 7 | 4 |
| Вăрнар | 71,1 | 61,7 | 8 | 10 |
| Первомайски | 68,0 | 75,5 | 9 | 3 |
| Сĕнтĕр | 67,9 | 44,9 | 10 | 21 |
| Елчĕк | 64,0 | 48,7 | 11 | 18 |
| Калинино | 62,6 | 56,8 | 12 | 11 |
| Çĕрпӳ | 62,2 | 66,7 | 13 | 9 |
| Шупашкар | 61,6 | 53,1 | 14 | 13 |
| Советски | 59,5 | 44,3 | 15 | 23 |
| Элĕк | 59,5 | 46,1 | 16 | 19 |
| Куславкка | 59,0 | 49,5 | 17 | 16 |
| Комсомольски | 57,8 | 38,1 | 18 | 24 |
| Етĕрне | 56,9 | 44,4 | 19 | 22 |
| Октябрьски | 51,4 | 34,5 | 20 | 27 |
| Çĕмĕрле | 50,3 | 45,6 | 21 | 20 |
| Красноармейски | 47,0 | 49,2 | 22 | 17 |
| Шăмăршă | 43,6 | 55,1 | 23 | 12 |
| Пăрачкав | 43,2 | 5[illegible],0 | 24 | 14 |
| Тăвай | 37,7 | 68,7 | 25 | 8 |
| Чкаловски | 35,4 | 34,3 | 26 | 28 |
| Хĕрлĕ Чутай | 35,3 | 37,5 | 27 | 25 |
| Кувакино | 8,1 | 35,9 | 28 | 26 |

### 1944 çулшăн аш-какай параççĕ

КАЛИНИНО. Районри нумай колхозсем государствăна аш-какай памалли 1943 çулхи плана тултарнă хыççăн 1944 çулшăн пама пуçларĕç. Паянхи куна государствăна çитес çулшăн 317 центнер ытларах аш-какай панă. Вăл хисепрен Алгазинори «Чăваш Коммуни» колхоз 36 центнер, Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 16 центнер, Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз 15 центнер панă. Пурĕ 22 колхоз çитес çулшăн аш-какай пама тытăннă.

Б. ШОРНИКОВ.

### Вăкăрсене кӳлме вĕрентеççĕ

СЕНТЕРВАРРИ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Шуршăл ялĕнчи ветеринари участокĕн заведующийĕ И. Годияк юлташ вăкăрсене кӳлме вĕрентес тĕлĕшпе лайăх ĕçлет. Вăл тăрăшнипе «Социализм», «Малалла», «Наука Ленина» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче икшер вăкăра ĕçе вĕрентсе çитерчĕ. Халĕ çав вăкăрсемпе улăм турттараççĕ, уя тислĕк кăлараççĕ.

Годияк юлташ тата «Искра», «Моряк» колхозсенче икшер вăкăра ĕçе вĕрентме тытăннă.

Ф. ИЛЬИН.

ПĔЧĔК ФЕЛЬЕТОН

## Фрицсен эрни

**Тунтикун.**

СС «Аслă Германия» дивизийĕнчи 2-мĕш полка пынă хаçат корреспонденчĕ салтаксене корпус командирĕн «Вилсен те каялла чакмалла марри çинчен» калакан юлашки приказне вуласа панине итлет.

**Ытларикун.**

Çав корреспондентах çав 2-мĕш полкри салтаксенчен ыйтать:

— Корпус командирĕн «Вилсен те чакмалла марри çинчен» калакан приказне манман-и, лайăх пĕлетĕр-и вăл приказа?

— Пĕлместпĕр! — теççĕ пĕр хăрас салтаксем.

Çав кунах хайхи корреспондент çав приказах салтаксене тепĕр хут вуласа панине итлет.

**Юнкун.**

Çав корреспондентах çав полкри салтаксенчен ыйтать:

— Корпус командирĕн «Вилсен те чакмалла марри çинчен» калакан приказне пĕлетĕр пулĕ ĕнтĕ?

— Пĕлместпĕр! — теççĕ татах салтаксем.

Çав кунах корреспондент çав приказа салтаксене тепĕр хут вуласа панине итлет.

**Кĕçнерникун.**

Корреспондент салтаксенчен ыйтать:

— Корпус командирĕн «Вилсен те каялла чакмалла марри çинчен» кăларнă приказа пĕлетĕр пулĕ ĕнтĕ?

— Пĕлместпĕр!—теççĕ татах салтаксем.

Çав кунах корреспондент çав приказа салтаксене тепĕр хут вуласа панине итлет.

**Эрнекун.**

Корреспондент салтаксенчен каллех ыйтать:

— Корпус командирĕн «Вилсен те каялла чакмалла марри çинчен» калакан приказне пĕлетĕр пуль ĕнтĕ?

— Пĕлместпĕр! — теççĕ татах салтаксем

— Ма пĕлместĕр?

— Вуласа паман-ха.

— Мĕнле вуласа паман? Ĕнер хам хăлхампа хам итлерĕм вуласа панине.

— Эпир ĕнерхисем мар, — тет хăюллăрах пулнă пĕр салтакĕ. — Ĕнерхисене вырăссем вĕлерсе пĕтернĕ. Эпир кĕçĕр тин килнĕ... вилнисем вырăнне çапăçмашкăн.

ИВАН МУЧИ.

# Ют çĕршывсенче

## Çурçĕр Африкăра Рузвельт, Чан Кай-ши тата Черчилль пĕрле канашлани

ЛОНДОН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, унта декабрĕн 1-мĕшĕнче çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Президент Рузвельт, генералиссимус Чан Кай-ши тата премьер-министр Черчилль Çурçĕр Африкăра конференци туса ирттернĕ, унта вĕсен çар тата дипломатиллĕ советникĕсем те пулнă. Çакăн пек заявлени пичетлесе кăларнă:

«Темиçе çар миссийĕ малашне Японие хирĕç тумалли вăрçă операцийĕсем тĕлĕшпе калаçса татăлчĕç. Виçĕ аслă союзник хăйсен хаяр тăшманĕсене тинĕсре те, çĕр çинче те, сывлăшра та пĕр чарăнмасăр хĕсĕсе пыма пулчĕç. Вĕсене хĕсесси вăйланса пырать ĕнтĕ. Виçĕ аслă союзник çак вăрçа Япони агрессине чарас тата ăна тивĕçлипе тавăрас тесе вăрçаççĕ. Вĕсем хăйсем валли нимĕнле çĕр те тупасшăн мар, хăйсен çĕрĕсене аслăлатасшăн мар. Вĕсен тĕллевĕ çакă: 1914 çулхи пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă пуçланнăранпа Япони Лăпкă Океан çинче тытса илнĕ е оккупациленĕ мĕнпур утравсене унтан каялла туртса илмелле тата Япония Китайран тытса илнĕ мĕнпур территорисене, сăмахран, Манчжурие, Формозăна тата Пескандорски утравсене, Китай республикине тавăрса памалла. Япони ăна вăл хăйĕн çаткăнлăхне пула вăйпа туртса илнĕ ытти мĕнпур территорисенчен те хăваласа кăлармалла. Малта асăннă виçĕ аслă держава, Корейăн чуралантарнă халăхĕ çинчен астуса тăрса çапла йышăнчĕç: вăхăт килсе çитсен, Корея ирĕклĕ те никама пăхăнса тăман çĕршыв пулса тăмалла. Çак тĕллевсене асра тытса, виçĕ союзник, Японипе вăрçă вăрçакан пĕрлешӳллĕ нацисемпе килĕштерсе ĕçлесе, Японие пĕр сăмахсăр парăнтармашкăн пысăк та вăраха пыракан операцисем туса пырĕç».

### СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «Вĕçекен крепоçсен» пысăк соединенийĕсем декабрĕн 1-мĕшĕнче Рейн облаçĕнчи Золинген хулине тата ытти объектсене тапăннă. 27 йывăр бомбардировщик, 1 çăмăл бомбардировщик тата 14 истребитель хăйсен базисене таврăнман.

Тăшманăн 28 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Декабрĕн 1-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Голланди самолечĕсемпе пĕрле Германин Альберти (Францин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи) заводĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

### МАРСЕЛЬРИ ПОДВОДНАЙ ЛОДКĂСЕН БАЗИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ çапла пĕлтерет: Çурçĕр Африкăри сывлăш çар вăйĕсем паян Германин Марсельри подводнăй лодкисен базине атакăланă.

### АНГЛИ САМОЛЕЧĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Берлина тапăннă. Вайлă пушарсем тухнă. «Москито» йышши самолетсем хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă.

Çав операцисенчен 41 самолет таврăнман.

## Германие хăваласа кайнă совет çыннисем валли каторгăри пек йĕрке туса хунă

### НИМĔÇСЕН ФАШИСТЛА ХАÇАЧĔ КАЛАНИ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсен «Поммерше цейтунг» ятлă хаçачĕ Германире «Хĕвелтухăçĕнчен килнĕ рабочисем» валли тунă йĕрке çинчен статья пичетлесе кăларнă (Германие ирĕксĕр хăваласа кайнă совет çыннисене гитлеровецсем çавăн пек ят панă).

Германире совет гражданĕсем хăйсен тумтирĕ çинче, кăкăрăн сылтăм енче, хăйсене палласа илмелли кăвак-шурă паллă çакса çӳреççĕ. Совет çыннисене мĕншĕн çавăн пек илеме çапмалла тунине çав хаçат çапла ăнлантарса парать: «Хĕвелтухăçĕнчен килнĕ рабочисем, хăйсен Хĕвелтухăçĕнчи характерĕ тăрăх, нумайĕшĕ пире курайманççĕ. Çавăнпа вĕсем çине палласа илмелли паллă çакмаллах пулнă. Çапла туни нимĕçсене Хĕвелтухăçĕнчен килнĕ рабочисемпе сахалтарах çыхăнма май парать», тет.

Хаçат малалла Германие ирĕксĕрлесе хăваласа кайнă совет çыннисене концентрациллĕ лагерьсенче усрани çинчен çырать. «Хĕвелтухăçĕнчен килнĕ рабочисене лагерьсене вырăнаçтарни те кирлĕ ĕç пулса тăчĕ,—тет вăл,—çапла тунипе вĕсене ытти çынсенчен пĕтĕмпех уйăрса яма май пулчĕ», тет.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.


ПОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙĔН Взаимнăй страховнипе взаимопомощĕн Чăваш республикинчи кассине çак ĕçсене пĕлекенсем кирлĕ: çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, довереннăй врач (тата урăх вырăнта ĕçлет пулсан та юрать), оргинспектор, ача учрежденийĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен бухгалтер-ревизор, бухгалтер-контролерсем, çавăн пекех тата шут ĕçне ĕçлесе вĕренес текен учениксем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, дом 21 (здание промартели Кожупряжь). Телефон 6—79 (два звонка). 2—1.

МТС-пе çĕр органĕсен союзĕн обкомне ГЛАВНАЙ БУХГАЛТЕР, БУХГАЛТЕР-РЕВИЗОР тата МАШИНИСТКА кирлĕ. Главнăй бухгалтерĕн ĕç укçи-уйăхне 750 тенкĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 7 (во дворе), 2-ой подъезд. Телефон 2—35. 2—1

ЗАВОДРА ĔÇЛЕМЕ çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: экономист, секретарь-машинисткăсем, бухгалтери работникĕсем, кладовщиксем, фотограф, библиотекарь, чертежниксем, копировщиксем.

Чугун çул çинче ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: поезд составителĕсем, сцепщик-стрелочниксем, пострара тăракан дежурнăйсем, вагон осмотрщикĕсем, çулсене юсакан рабочисем.

Тата токарь-фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, строительнăй рабочисем, грузчиксем, прачкăсем, подсобнăй рабочисем тата уборщицăсем кирлĕ.

Арçын е хĕрарăм вахтерсем (охранниксем) тата пожарниксем кирлĕ.

Çавăн пекех тата тĕрлĕ специальноçсем тăрăх переквалификацисене (15 çул тултарнă е унтан аслăрах учениксене) илеççĕ.

11 сехетрен пуçласа 15 сехет çитиччен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков.



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1163 Типографня №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14 400 экз.